кс(Чув)
Ф33
4-36755

ЛЮБОВЬ ФЕДОРОВА

# ÇИЧĔ ХĔЛĔХЛĔ ТĔНЧЕ

Национальная библиотека ЧР
4-036755

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

КС (Чув)
Ф 33

# ЛЮБОВЬ ФЕДОРОВА

# ҪИЧӖ ХӖЛӖХЛӖ ТӖНЧЕ

кр

К 84.09(2=Чув)6-52
Обязат. экз.

*"Çичĕ хĕлĕхлĕ тĕнче" кĕнекене кĕрсе курнă хыççăн чуна илĕртÿллĕ, ÿпкевсĕр, ачаш поэзи тыткăнларĕ.*

*Любовь Федорова çут çанталăка, илеме, этемлĕхе савакан çын. Унăн çуралнă кĕтесĕ, ашшĕ-амăшĕ, юратнă çĕр-шывĕ пур. Тăван чĕлхемĕр сăвăçа иксĕлми вăй-хăват парса тăрать. Çавăнпа унăн сăввисем ăшпиллĕ, тарăн шухăшлă, асамлă. Чĕлхи яка, çыпăçуллă.*

*Любовь Федорова паянхи литературăна çĕнĕ сывлăш кĕртсе ăна татах та пуянлатрĕ: унра чăвашлăх пурăнать, чĕринчен таса çăлкуç тапса тăрать.*

*"Çичĕ хĕлĕхлĕ тĕнче" вулакана савăнтаракан, пурăнма хавхалантаракан кĕнеке.*

---

*"Çичĕ хĕлĕхлĕ тĕнче" алçырăвне кун çути кăтартнă "Елчĕк" ентешлĕхĕн ертÿçине Олег Николаевич Викторова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ университет ректорне Лев Пантелеймонович Куракова чĕререн тав тăватăп.*

*Чăвашра ырă çынсем пур-мĕн, пурăнатпăрха.*

Любовь Федорова

ПРОВЕРЕНО
20 10

4-36755
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ



*Любовь Федорова* –

Раççей писателĕсен Союзĕн членĕ.

Вăл Чăваш Республикин Елчĕк районĕнчи Энтепе ялĕнче çуралса ӳснĕ. Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă.

Çĕнĕ Тĕмер, Аслă Пăла Тимеш, Энтепе шкулĕсенче ĕçленĕ, тăван чĕлхе вĕрентнĕ. Унăн сăввисем Республикăри хаçат-журналсенче, коллективлă сборниксенче пичетленеççĕ.

Малтанхи "Йӳçĕ пыл" сăвă кĕнекишĕн Любовь Федорова 1992 çулхи вулакансен преми лауреачĕ ятне илме тивĕç пулнă.

"Çичĕ хĕлĕхлĕ тĕнче" – авторăн иккĕмĕш кĕнеки.

Любовь Федорова халĕ Шупашкарти 34-мĕш шкул-гимназире ĕçлет.

***

Çинçе турат лартатăп савăта
Çурхи кунра асамлăн вăй илмешкĕн,
Вăл тивĕç мар, шутлатăп та, вилмешкĕн,
Çĕнтерĕпĕр пĕрле ку вăхăта.
Тухсассăн унăн пĕчĕкçĕ папки,
Шыв çулĕ тăрăх нӳрĕ хăпарсассăн,
Йышланнă май хуллен хăлха çакки
Эх, тапĕччĕ вара чĕре хавассăн.
Сиплевçĕ евĕр чирлĕскерĕмпе
Ачашшăн калаçатăп, хĕрхенӳллĕн:
- Мĕн пулчĕ, тусăм, ыратать мĕскер?
Пăхатăн мар-и питĕ кӳренӳллĕн?
Кайсассăн чун, сисчевлĕх пирĕнтен,
Мĕн юлĕ-ши малашшăн çут тĕнчен?

***

Çил хапхаллă пушă сĕмлĕх
Хăлтăр-хăлтăр! тунă чух
Тапранмасть пушшех те чĕлĕх,
Ăш-чикре вут-çулăм çук.
Аçа-çиçĕм çиçнĕçемĕн,
Тăвăл çавраннă кунра
Капланать илемлĕ çемĕ,
Вăранать вăй-хал юнра.
Уйăхран та, çăлтăртан та,
Кайăкран та çĕмĕртрен
Çыранать поэма, ода,
Çеçкене ларать сирень.

***

Ванчĕ тĕкĕр чăл та пар!
Кайрăн-шим манран, тивлетĕм?
Куртăм ăнăçсăр типшар.
Ванчăк кантăкшăн йĕретĕп.
Пуçтармашкăн çук ăна,
Кăтартаймĕ тек сăна.
Мĕншĕн ватрăм тĕкĕре?
Чĕм паратчĕ вăл сĕре.
Тен, эп тĕшмĕшлĕ хăш чух,
Пурнăçран та юлнăскерĕм.
Куçкĕскисĕр ăшă çук.
Çыпçăнсамччĕ, çутăскерĕм.

***

Кăввик-кăввик кăвакарчăн, кăлтăртатмăш кайăк эс,
Тĕлĕнтермĕш вăйлă каччă, эс камне епле пĕлес?
Тĕнкĕл-тĕнкĕл çур кĕввиллĕ янкăс хĕлĕхлĕ кунра
Çупăрларăн-евĕклерĕн, тем вăранчĕ ман юнра.
Хамăр хывнă кĕпер çийĕн карлăк çакрăмăр пĕрле,
Çылăхне те пĕччен марччĕ иккĕн турăмăр çĕрле.
Кăввик-кăввик кăвакарчăн, ма вĕçетĕн аякра?
Ăмăрт каччăçăм, савниçĕм, эсĕ манăн чунăмра.

***

Эс ăнкарулла, тилхепе:
Ыр утăн юрттине ăнланнăн,
Çул кăтартуçăн та тăваннăн
Тăнлатăн манăн тимлĕхе.
Ма турткалас сана хиствлĕн
Сĕм-тĕттĕм çăлтăрсăр хирте?
Пĕлетĕп эп: çунам тиевлĕ,
Лашамçăм ывăннă, чĕтрет.
Чĕнмесĕр, лăпкăн, теветкеллĕн,
Вут çутине, ăшша туйса,
Утса пыратăн, вырьăх, меллĕн,
Мĕскер калам-ши тав туса?
Эп кĕçĕр пултăм тилхепеçĕ,
Çул пĕлекенĕ, тусăм – эсĕ.

***

Тăват кĕтеслĕ пÿлĕм - ман тавра,
Малалла пăхсассăн - пĕр çавра.
Е кайса пăхам-и тÿрĕрен,
Мĕн ырри кĕтетĕн тÿререн.
Вырăн пулмĕ маншăн çăтмахра,
Тăпăртататăп вĕçĕм тамăкра.
Хутăп вилĕм хуранне лере,
Çын шăпийĕ шутсăр тĕрлĕрен.
Тĕттĕмре те пĕчĕк çăлтăр пур,
Çутăра курмастăн эсĕ хур.
Пăнчă тимлекенĕн кăнтăрла
Пурнăçĕ те иртĕ ăтăрла.
Кăшт кăна пулсассăн теветкел –
Сулхăнра та йăл кулать хĕвел.

***

Аслатиллĕ аçа-çиçĕм эс пулатăн, Аçтаха,
Миф сăнарлă çĕр чĕрчунĕ Комодо калти-варан.
Янкăсен пур киккириклĕ кил илемĕ игуан,
Мускаври килйыш агамĕ юрататчĕ таракан.
Аçтахаллăн курăнать–тĕр чăвашра ула така,
Ачасемшĕн, - юмахлатнăн, вăрманти улатакка.
Вырăссен сăмахĕ тăрăх, шыв чĕр чунĕ –
крокодил,
Аçтаха – пăлан сăнарĕ, мăн тĕпеклĕ хур аçи,
Аташра аташтаратчĕ нарăс каçĕ арçури,
Кукăр-макăр пускалатчĕ çатракаллă ар ури.
Пайăтри Хĕветĕр мурĕ хуçрĕ çурмаран пĕкке,
Аçтаха – халап сăнарĕ, вăкăр евĕрлĕ сĕкет.

***

Эп шухăшпа çӳретĕп ĕмĕлкен,
Ман курăнас килмест ытла ĕлккен.
Тăрасшăн мар çӳлте хам халăхран,
Асси пулас килмест çапах йăхра.

***

Тĕлĕнтермĕш илтрĕм-ха,
Тĕлĕнтермĕш куртăм-ха,
Шăл çĕмĕрсе кĕрет, тет, -
Телей çакă пулать, тет.
Катăк шăллă пултăмах, -
Çурма телей куртăмах.
Пĕр шăлсăр, ай, юлтăмах, -
Тулли телей куртăмах.

***

Эс кайрӑн та – каймарӗ пуль тӗнче:
Эп ишрӗм тарӑн тинӗс тӗпӗнче,
Пӗр вӑхӑт йӑралантӑм юшкӑнра,
Ман ятӑм – шывӑм илтӗнчӗ хура.
Эс кайрӑн та - чупаттӑм эп ҫуран,
Пирчесшӗн марччӗ уҫӑлнӑ суран,
Элекӗ ҫакӑнатчӗ кӗперен,
Сӑмахӗ пулчӗ шутсӑр тӗрлӗрен.
Эс кайрӑн та – каймарӗ Ырату,
Чун сурнӑ майӑн ҫунчӗ Юрату.
Эс килтӗн – сӳнчӗ маншӑн ҫут тӗнче,
Кайсам, савниҫӗм, лӑпкӑ тӑр–пӗччен.

***

Шап-шурӑ тӑманра сӗмленнӗ шухӑш,
Мӗн-ма вӗҫетӗн лӑпланса тасан?
Эс ҫаврӑнаттӑн аскӑн куҫлӑ, шуххӑн,
Тавралӑха ҫил-тӑвӑл хускатса.
Халь сассӑр кӗтесре тупасшӑн канлӗх
Пӗр тӑнӑҫлӑхсӑр пурӑннӑ Чӗре.
Вӑл халсӑр тапнӑ чух ҫынсем мӗн калӗҫ?
Юн, хум ҫилхиллӗн эс кӗрсем чӗрре.
Чуп, ыткӑн-вайкӑн Ҫӗмӗрт шывӗ саслӑн,
Ҫур кунӗ ҫитнӗн савнӑ ялӑма.
Нар питлӗ кулкалам ялан хаваслӑн,
Чӗреҫӗм, санӑн шухӑ тапмалла.

***

Сан шухăшнах йĕрлетĕп пуль,
Эс çырнинех çыратăп пуль.
Тен, эсĕ те – пулатăп эп,
Эпир – пĕр кĕвĕллĕ дуэт.

***

Ку каçăн асамне мĕн-ма пытарăп? -
Хĕл ларнă майлăрах кăштах юнтарăп,
Пĕлетĕп эп пемешкĕн кутăна,
Çухатнă евĕр пулăп, тен, тăна.
Мăртлатнăн ларăп пĕчĕк хĕр пĕрчийĕн
Е çăлтăр куçлă кĕмĕл юр пĕрчийĕн,
Е пирĕштиллĕн кĕрĕп канăça,
Тимленĕн сăнăп ĕмĕт-шанăça.
Çак юмахри савниллĕ Вутăш хĕрĕн
Телейлĕ иртĕ юратуллă çĕрĕ.

***

Хÿхĕм чечеке пыл хурчĕ лармасан,
Ешĕл пахчана саркайăк сăрмасан,
Авăтмасассăн çырмара куккук –
Тавран илемĕ çук.
Кур: ылтăн хурт тем чухлĕ çаранра,
Юрларĕ кĕçĕр кайăк пахчара,
Пĕр чарăнмасăр авăтрĕ куккук,
Пуçра салхулăх çук.

***

Тикĕт пек пулсассăн та хура
Перекетлĕ тыт, эс, çăкăра:
Пĕр тĕпренчĕк ан ӳкер çĕре,
Çăкăр çыншăн кирлĕ кунсерен.

***

Хĕл тӳшекĕ – йывăр пуснăн –
Çĕтĕк-çатăк хăш тĕлте.
... Шухă çилпелен, тĕк пуснăн,
Юр пăтратрĕ пĕлĕте.
Шурă каркăç уçăлмалăх
Тупаймарĕ пуль самант:
Куçăма хуплать шăналăк,
Кун илсех пырать хăват.
Каялла тумастăп утăм,
Мĕн пулсан та – малаллах.
Курмаллах ман пĕчĕк çутă
Кăларсассăн вăй-хала.
Кукленет çын пĕр çĕрте,
Тем те пулĕ ĕмĕрте.

***

Аскăн мар-и ĕнтĕ çил ачи:
Чуптарать пĕчченçĕ катаччи.
Арпаштарнă çилхине юри,
Урăм-сурăм илтĕнет юрри.
Хăрхăм тупрĕ, курăр, тăрпалтай,
Тем кала та – лешĕ çăмăлттай:
Илчĕ хăйĕн ытамне хĕре,
Чарăнмасăр вĕçĕм ихĕрет.

***

Çанталăк илтĕр манăн ыйăха,
Ӳпкевĕм пулмĕ уншăн уйăха:
Эп çĕр чĕртмешкĕн килнĕ çĕр çине,
Çапла çуратнă турă çынсене.
Телейлĕскер, ирттерĕп ĕмĕре
Пĕр çăлтăр çинелле пăха-пăха.
Унта хывасшăн вăрăм кĕпере
Шыратăп эп чи хаклă сăмаха.
Ах, шутсăр аякра-мĕн çав хĕлхем,
Сăвайăмсем, çитейĕр-ши кайран?
Çителĕклĕ пулсан та – халлĕхе,
Тармастăп пурпĕр хурлă шăпамран.
... Хывать – хывать çын ĕмĕт кĕперне,
Ун савăнмашкăн юлнă, тен, эрне.

***

Маншăн хӳхлеместĕн эс салхун,
Маншăн нăйкăшмастăн эс, гитара.
Саншăн эпĕ иртнĕ тĕлĕк, кун.
Шупкаланнă сăнлăх çеç, мăнтарăн.
Эп кĕресшĕн санăн кĕввӳне
Çĕр чĕртеттĕм çăлтăр çуннă майăн,
Ĕнереттĕм шăппăн, пĕчĕк кайăк,
Килчĕ чуншăн ĕмĕрлĕх ӳнер.
Унăн тӳпинче мĕн чухлĕ вăй,
Унăн килĕнче мĕн чухлĕ сăй,
Муза тĕнчинче - кашни поэт,
Юрăç та ӳнерçĕ, Президент!

***

Пĕлетĕп: пурнăç шутсăр тĕрлĕрен,
Вăл вĕççĕр тăсăлан сюжетлă проза,
Асапĕпе телейĕ – ик тĕсрен:
Сĕм тĕттĕмлĕх, садри шап-шурă роза.
Илтетĕп эпĕ çитмĕл çичĕ сас
Поэзи пахчинче çÿренĕ майăн,
Пĕр кайăкĕ юрлать ытла ансат,
Пур кăткăс кĕвĕре те пурнăç лайăх.
Курасчĕ ытларах та ман тĕссем,
Илемлĕ чунлă пулĕччĕç çынсем.

***

Çил пуснă ик енлĕ çыранлăх, -
Ачалăхĕн йĕрĕ çырмалăх.
Тем çÿллĕш хунанă хăва,
Эп саншăн халь пĕчĕк хăна.
Тахçан вĕтлĕх тăрăх чупаттăм,
Мана эсĕ хыт чуп тăваттăн,
Ларсан лапчăнатчĕ çерем,
Манпа эс чĕртеттĕн çĕре.
Çич саслă асамлă хăвалăх,
Яш ĕмĕршĕн юлтăн хăналăх.

***

Малтанхи сукмака тунă евĕр аран,
Тарăн юр кĕртĕнче ашса пынăн çарран
Эп хыватăп кĕпер санпала хам хушша,
Тытаясчĕ унта иккĕн пулнă ăшша.

***

Çĕмĕрт хăрнă çакă вырăнта,
Авăс, çирĕк, шурă хурăн та.
Хăмăрланнă темĕншĕн çерем,
Эсĕ те итлесшĕн мар, чĕрем.
Тăнласамччĕ манăн сăмаха,
Çĕнтеретпĕр, тусăм, тумхаха:
Симĕслентĕр ку тĕлте çаран,
Тымарлантăр ишĕлнĕ çыран.
Ӳстермешкĕн тивĕç санпалан
Асăнмалăх çĕмĕрт те палан,
Шĕшкĕлĕх хунатăр çулсерен,
Лартăпăр юманлăх та сирень.
Шурлăх чапĕ – хĕрлĕ кĕтмелте,
Шур çырли те пулĕ ку тĕлте.
Кăмпана çӳресчĕ хырлăха
Сухăр сĕмĕ çапнă ырлăха.
Çĕнететпĕр сарăхнă çĕре,
Итлесемччĕ эс мана, чĕре.

***

Эп сӳнтертĕм санăн шăрпăк çулăмне,
Эс сӳнтертĕн манăн ăшăмри вута.
Нимĕн те чĕртмерĕ кăмăл вутчульне,
Çункăç çеç кĕлленчĕ хĕмсĕррĕн унта.
Мĕн сӳнмесĕр юлнă? Пирĕн ку – пушар,
Иксĕмĕршĕн пулчĕ хурлăх та типшар.

***

Тахçанах юрламасть сарă кайăк,
Уншăн йывăç турачĕн çук айăп.
Хăрнă пирĕн умри хурама,
Чĕвĕл сасă тухмасть урама.
Пĕчĕк кайăкшăн лартрăм йăмра
Юрăпа вăранма ирсерен.
Вăл вĕрентĕ ачашшăн ырра,
Кĕвĕ майĕн вăрантăр сирень.
Тахçанах юрламасть сарă кайăк,
Уншăн хăрнă туратăн çук айăп.
Йывăç кирлĕ мĕн пур таврара,
Кайăк-кĕшĕк юрлатăр, ара.

***

Картина сăнарне чĕм панăскер палитра,
Хăйне кам парĕ чун халь тĕттĕмре?
Тем тĕрлĕ сăрлăскер, ăстаçăна вăл кĕтрĕ,
Çын вилĕмĕ кĕскетрĕ ĕмĕре.
Нимех те юлайман килйышшăн ват ÿнерçĕн,
Хăварнă мулĕ – халăхшăн кăна.
Вăл пурăннă пулсассăн та – тĕнчешĕн.
Мĕн тăвăн, эпĕр – вăхăтлăх хăна.

***

Хура кунсен хурри пулать-и ĕнчĕ?
Çук тикĕтпе варлаймăн кĕмĕле.
Кашни çынах пулмасть нихçан та вĕчĕ,
Пурнас та марччĕ пирĕн шĕкĕлле.

***

Эрешмен карти.
Çинçе çип йӗрӗ.
Те тӗшмӗше эп хутăм чăнлăха?
Мачча çинчен анать вăл аçтахан –
Чӗп-чӗрӗ,
Пачах пăсмасăр канлӗ шăплăха.
Хыпарçă пек саламлашан, тискерӗм,
Сана эп элчӗ вырăнне хурам.
Йӗри-тавра эрешменсен кӗперӗ:
Çыру килет. Телейӗм те пурах.

***

Тӗнкӗл-тӗнкӗл! тӗнкӗлтетмӗш шăнкăравлă ут пӗкки,
Килтӗн-им кранк! кранк! сассиллӗн çăварниллӗ кун екки?
Вăхăтран иртсе чупаслăх туйăм пур-тăр урара...
Шăнкăр-шăнкăр шыв юххиллӗ савăк пурнăç урамра.
Шухăшăм, пӗр кутăнлашнăн, чăхăмланăн лашалла,
Темшӗн вӗçӗмсӗр пăхасшăн васкамасăр каялла.
Сӳнтересшӗн мар-тăр кăмăл иртнӗ кунăн вучахне,
Килӗштернӗн çав кăвайтăн çутă-çутă асапне.
Ялкăш çулăм – юр çинче,
Эсӗ маншăн - çур тӗнче.

***

Мана ан парăр темӗн тӗрлӗ ят,
Эп пулнă та, пулатăп халăх сăвăçӗ.
Ман унсăр та пур хамăн сăн-сăпат,
Пулмастăп эп нихçан поэзи сăвăсӗ.

***

Ах, тесе каламӑттӑм,
Эх, тесе каламӑттӑм –
Йывӑр шухӑш сырӑнчӗ,
Тем амакӗ курӑнчӗ.
Ах, ах...
Эх!

***

Шурӑ юр пек ирӗлессӗн
Туйӑнатӑн эс,
Ҫырмари шыв пек типессӗн
Туйӑнатӑн эс,
Ҫилпеле пуҫна пӗкессӗн
Туйӑнатӑн эс,
Темшӗн мансӑр та вилессӗн
Туйӑнатӑн эс.

***

Те хӑнӑхрӑм пӗр евӗр пурнӑҫа,
Пӗр сӑнлӑх вӗҫӗм курӑнчӗ куҫа:
Хӗвел тухать сӑрт хыҫӗ айӗнчен,
Каҫпа хӗп-хӗрлӗ анӑҫ темӗччен.
Улӑштаратӑп талӑк саккунне,
Хуплануӑ карчӑк пысӑк хӑлхине,
Кӗскетнӗ хӑйӗн вӑрӑм чӗлхине.
Ун умӗнче шыв, тӗкӗр-кӗленче.
... Хуп турттармастӑп вӑхӑтсӑр ҫӗрле,
Ларатӑп вупӑр тӗнчипе пӗрле.

***

Елчĕк çĕрĕ канлĕ кăтăшра,
Уй мулкачĕ тарăн шухăшра.
Хĕл иртмесĕр вăранаймĕ хир,
Мăкăрланчăк чĕлĕмлĕ пĕр ир.
Эпĕ халĕ чыслă хăнара:
Кĕрекеçĕ лартнă юр-вара,
Хур какайĕ, çăмăл аш, шăрттан,
Тĕрлĕ пулă, тĕтĕмлĕ çăрттан.
Ĕçтереççĕ кăпăклă сăра,
Темĕн тĕрлĕ хаклă эрехне,
Тутанса пăхатăп эп сыра,
Тăван ялăн тутлă шерпетне.
Елчĕк енĕм, тав сана сĕре,
Юрататăп эпĕ çак çĕре.

***

Асăнни – аллă кун,
Тĕмсĕлни – тăхăр кун,
Аякка каймалла,
Аппана курмалла.
Шухă пыр ярăнать,
Кĕçĕтет алтупань.
... Нӳхрепрен кăларать
Сăрине пĕртăван.
Шурă чăкăт касса
Суяппа хăналать.
Шăрттанне пуçласа
Йăмăкне вăл сăйлать.
Асăнма – аллă çул,
Тĕлĕнме – тăхăр çул.
Суяппаçăм, аппа,
Савăнатăп санпа.

Ч-36755
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

***

Çичĕ хĕлĕх çакнă пуль
Электрица юпине.
Нотăсемлĕ: ми, фа, соль...
Шăнкăрч ларнă фа çине.
Ми çинче - ула курак,
Кĕвĕллĕ хăйне кура.
Ик сасса пусать: ра-ра..!
Эп кунта патша, ур-ра!
Эреветлĕ те теветлĕ
Соль çинче чакак юрлать.
Кайăк хĕр пекех теветлĕ,
Вĕçкĕн çемĕ кăларать.
Шăпчăк çепĕç лира евĕр
Си, ми, реллĕ хĕлĕхе
Турткаларĕ питĕ евĕк
Мухтаса илемлĕхе.
Çичĕ тĕрлĕ нотăра
Юрă-кĕвĕ пит пуян,
Кайăк хорĕ урамра
Кунĕпех янрать паян.
Чăваш енĕн çĕрĕнче –
Çичĕ хĕлĕхлĕ тĕнче.

***

Лашана хĕнекен –
Арăмне хĕсекен.
Ырлăхран ыракан –
Кĕлмĕçе тухакан.

***

Чӗвен тӑрса пӑхатӑп кантӑкран:
Пытанчӗ-шим, пытанчӗ-шим тӑпра?
Ҫап-ҫамрӑк хурӑн ҫакнӑ чӗр ҫитти,
Шап-шурӑ юрлӑ савӑк хӗл йытти.
Эп кӗреймесӗр кӗмӗл тӗнчене
Упратӑп кӗрӗн сарӑ ӗнчине,
Сывпуллашмасӑр кайрӗ ылтӑн туй,
Пӗр харӑссӑн шуралчӗ пӗтӗм уй.
Тунсӑх чирӗ юлчӗ тӑпрара,
Шурӑ-шурӑ мамӑк таврара.

***

Шур илнӗ кантӑкӑн куҫне,
Ҫӗр кӗҫӗр шӑп ҫур талӑк суккӑр.
Йӑмра тӑратнӑ ҫухине,
Ларатӑп эпӗ те пӗр туссӑр.
Эс курпунланнӑ май, йӑмра,
Килен-каянӗ, ай, пит шутлӑ.
Ҫакмарӑм питӗркӗч-ҫӑра
Кӗртесшӗн мар ҫынна ҫич ютлӑн.
Е сивӗнтӗр, туссем, манран
Ҫӗр тӗрлӗ шухӑшлӑ пулнишӗн,
Виҫеллӗ-хурлӑхлӑ кулнишӗн,
Тухатӑп урама сайра.
Эп ватӑ мар-ха халлӗхе,
Туссем, куҫ хӗмӗ те ялтравлӑ.
Илтсемӗр ҫепӗҫ хӗлӗхе:
Ҫур кунӗ саслӑ, шӑнкӑравлӑ.

## Хёртсурт

Сарă-сарă йывăç çурт,
Сарă пўртре – сар сентре.
Пурăнать кунта хёртсурт
Ăшăра та сивёре.
Чăррăк! Чăррăк саслăскер,
Питё-питё ăшăскер.
Кăлтăр! Кăлтăр! çăм арлать,
Ун йёкийё шав юрлать:
«Кун килет те çёр килет,
Хёл иртет те çур килет,
Ăшă-ăшă пўлёмре,
Пётём пурнăç - илемре.
Сак тулли – ача–пăча,
Пёринчен тепри маттур,
Тёпелте пур улача,
Вăл хёвеллё - çке, ай, тур!
Кил хуçин ёçчен алли
Тёртнё ачисем валли
Тёрлё тёслё çиппелен,
Хурçă вёçлё йёппелен».
Çавра сётел хушшинче –
Ырă пёлёш – хурăнташ.
Кăмакан вут ăшшинче –
Çуртшăн çак Хёртсурт – юлташ.
Вăл сыхлать пур инкекрен:
Пушартан та сивёрен,
Тăвăлтан та шăрăхран,
Аякран е çывăхран.
Кил-çуртра усал-тёсел
Ернине пёлсен Хёртсурт
Ай, сăнать те тимлесе,
Ун тăшманё – пётём хурт.
Юратмасть эрешмене,

Шӑнана та пӑвана,
Тӗрлӗрен эрехсене,
Арӑш-пирӗш тӑвана.
Ёҫкӗпе ҫын иртӗхсен,
Туслашсассӑн Шуйттанпа,
Йӑйӑр евӗр ӗрӗхсен, -
Сывпуллашӗ вӑл санпа.
Килӗшмест ӑна шӑв-шав,
Тӗрлӗ – мерлӗ якӑлти.
Юратмасть Хӗртсурт шӑрша,
Е пулсассӑн йӑхӑлти.
Вӑл тухса тарни ҫуртран
Систерет пур инкеке.
Савӑнӑҫ Хӗртсурт ҫукран
Пӗтсе ларнӑ иккенне.
Пушанать ҫавра сӗтел,
Пӗтрӗнет унта Эсрел,
Сакайне Усал кӗрет,
Пусмӑрлать чипер хӗрех.
Маччара ларать Шуйттан,
Мӗн ырри кӗтен унран –
Сыхлаймасть сире Хӗртсурт,
Саланать ҫапла кил-ҫурт.

***

Манăçнă тĕлĕк
Тесеччĕ сана,
Канăçнă хĕлĕх
Тесеччĕ сана,
Тăкăннă сĕлĕ
Тесеччĕ сана,
Хуçăлнă чĕлĕх
Тесеччĕ сана –
Курăнатăн.
Янăратăн.
Пуç яратăн.
Сыпăнатăн.

***

Сисчевлĕ туйăм юлчĕ халлĕхе,
Хăравçă куçлă пĕчĕк кайăкла.
Вăл сĕлкĕшшĕн ăсатрĕ çак хĕле:
Юр шурă тĕслĕн çиçрĕ кăлăхах.
Мĕн пулчĕ-ши сенкер каçа курман
Ем-ешĕл курăк тĕслĕ куçсене?
Илемлĕ пурнăç, шурă е хура...
Мĕн ма усатпăр эпĕр пуçсене?
Чĕв-чĕв-в-ĕк, чĕв-вĕк! саслă шăпчăкпа
Ларассăм пулмĕ тетĕн-и пĕрле?
Пĕчченçĕ кайăк пĕчĕк шанчăкпа
Юрлатăн чĕввĕк, чĕввĕк! эс çĕрле.
Салхуллă тусăм, сыпăннă турат,
Хаваслă юрă-кĕвĕ çеç шăрат.

***

Шартлатса çурăлать пĕрене,
Мĕн юлать паянтан ĕнере?
Талăк, чĕрĕк сехет те минут,
Тăпăрт-тăпăрт! сикен юлан ут...
Мĕн юлать пирĕнтен кунсерен
Эрнене, виçмине, ырана? -
Çут çанталăк ачи те сирень,
Парнелесчĕ сире хурăна.
Эп хăварăп хыçа ĕмĕре,
Хампалан илмĕп сарă кĕре,
Чун кайсан та – килет ăшă çу,
Ылтăн-кĕмĕл çынсемшĕн ман çук.
Çўпçемре мăнуксемшĕн пурри –
Пĕтĕм мулăм – ман кăмăл юрри.

***

Манпа сана уйăракан,
Манпа сана çураçтаракан
Кĕпер ишĕлчĕ.
Кам çапĕ сăвайне?

***

Иртнинче - эсĕ мар, манăн кăмăл,
Эпĕ шаннă-ĕненнĕ кунçул.
Лĕпĕш пек эсĕ вĕçрĕн çăп -çăмăл,
Халиччен-ха тумхахлă ман çул.
Сан çурхи шухăшна пĕлеймерĕм:
Вăл раштав çилĕ пулнă иккен.
Тутантартăн, савни, йўçĕ эрĕм,
Пурнăç- йĕплĕ шăлан–мĕн, кикен.

***

Шăп сассăм илтĕнмен чухне çынра –
Эс чуншăн хаклă, йывăçăм - йăмра:
Ăнланнăн тумитлетпĕр иккĕн чух,
Мăнкăмăллăх сан, тусăм, чĕптĕм çук.
Çапса антарнă симĕс вуллуна
Эп хĕрхенӳллĕн тытрăм кашнинче.
Пĕр чурăс çын сӳнтернĕ куллуна
Çĕклесшĕн манăн кăмăлăм пĕччен.
Халь çапнă-хуçнă вăхăт çĕр-шывра,
Тымарсăр-кăксăр хăварасшăн пуль:
Этемлĕх хӳтлĕх, тăнăçлăх шырать,
Укçасăр çыннăн шав юхать куççуль.
Эс илтĕн хăвăн хӳтлĕхне, йăмра,
Ман евĕр săвăç-юрăç тенине.
Вулаççĕ те, калаççĕ ав тăмра...
Пĕлетĕн эс ӳнерçĕ еккине.
Çын мулсăр та юрлать - ташлать иккен.
Шуçăм киличчен – кĕсле сасси.
Пирте поэзи ӳстермест кикен,
Çыравçă хушшинче пулман асси.
Мĕн чухлĕ çамрăк санăн хӳтлĕхне
Ларса састашлăх, тоника шырать.
Упрасчĕ-çке йăмралăхăн йăхне,
Унта чăвашлăх чунĕ пурăнать.

тумитлетпĕр – калаçатпăр.

## Мунча

Мунча хутрĕ кукамай,
Юратать вăл çапăнма.
Йăшши ячĕ те самай,
Тытăнчĕ такмаклама:
- Хаярри хуран тĕпне,
Сĕрĕм – тĕтĕмĕ çӳле,
Ачашлар-ха Хĕртсуртне,
Шăркине силлемелле.
Пăс пек шурă пулмалла,
Хĕрĕх чир кăлармалла.
Кĕсенне - çырма пуçне,
Атташа – пур çăпанне.
Мухмăр чирĕ – Мăрата,
Кăрчанакĕ – ямăта.
Хĕсĕрлеймĕ хĕрлĕхен,
Тухтăр- пĕттĕр пур кикен,
Тасалатпăр кирĕкрен.

***

Тарсам, ултавçă, мĕлкӳпе пĕрле:
Хатарлăху тухайнă сан çĕрле.
Эс хĕрсене йĕртме кăна ăста,
Хӳтĕлесси – юратасси ăçта?
Эп вырăна хуратăп çынлăха,
Киленĕçшĕн, эсрел, ан çулăхах.

***

Шур илнĕ куçлă юхăннă карьер.
Ун кăкăрĕ те, типнĕ пек, тăртанчăк.
Çĕр пичĕ шыв çăтмасăр курнăн терт
Ир сывлăмĕ ĕçсе пăсланчĕ.
Ман савнă ялăм шутсăр айлăмра,
Ун тухăçĕ енче - вăрман та кӳлĕ.
Хуплана çуртсене лаштра йăмра,
Уй тăрăх тăсăлать карьерăн çулĕ.
Хамран ик хут çап-çамрăк хырлăха,
Кавирĕн ӳснĕ симĕс улăха
Куратăп та – тухатăн Энтепе,
Çĕр - шывăн пайĕ, юраллă тӳпе.

***

Çăтăр-çăтăр! тунă майăн хăмăл
Юншăхласшăн мар-и эсĕ, кăмăл?
Пултăрах çĕр çиййĕнче тĕтре,
Çĕпре.
Кайăк хур кикак! кикаклатсассăн
Мĕн тума сывлатăн эсĕ ассăн?
Çитмĕ тетĕн пулĕ шавлă çур
Тепре.
Пĕлĕт лутраланнă майăн çумăр
Кантăк тăрăх юхĕ шăпăр – шăпăр!
Пурпĕрех çанталăк уяртать
Тĕпрен.

***

Çурхи кунсен çанталăкĕ умра,
Кун кĕнекин мĕнпур çулталăкĕ.
Ачаш, кăра та тăвăллă сăнра
Чĕриклететчĕ пек çил алăкĕ.
Кĕртесшĕн марччĕ вăл мана шала
Хăйĕн саккунне кăна ăнланнăн,
Çил уттарасшăн пулчĕ малалла:
Çĕр экзамен тытмаллаччĕ манăн.
Ларас – тăрас килменнĕн пĕр тĕлте
Вăхăт календарĕпе чупуçăн,
Пур шухăш çĕкленетчĕ пĕлĕте,
Шухăскер, вăл пулаймарĕ уçă.
Çитмен кĕре саваттăм кăрлачра
Кăмăлăм хĕле шыранă майăн.
Тем тĕлĕретчĕ питĕ шăрăхра,
Ку кахалшăн марччĕ пулĕ айăп.
Халь сăнатăп: лăпкă таврара,
Юр, çу касĕ, çулсă пек манра.

***

Эп санăн шурă пĕлĕтŭ пуласшăн,
Эс çŭлелле тинкернине курасшăн.
Эп сивĕ çил улавĕ çеç пуласшăн,
Сан хăлхусем тимленине туясшăн.
Эп ŭкнĕ куçлĕ çĕрĕ пек пуласшăн,
Кам тупакан ачашлăхне туясшăн.

## Чул-чечек

Сана шăтса тухать тесе
Никам та шутламан:
Кĕсье тĕпне çеç силлесе
Хăварнă ăнсăртран.
Кун çутине курайманран,
Çеçкем, эс шуранка.
Ӳсеççĕ ирĕк улăхра
Сан тусусем парка.
Чул çĕмĕрсе тухма хăват,
Кирлех вăй-хал пире.
Чечек вут-хĕмĕн ялкăшать,
Хитре вăл тĕнчере.

***

\- Манăн çăлтăр, - теççĕ савнисем.
Çăлтăрсем пиншерĕн ялкăшаççĕ.
Хамăннех савмаççĕ-ши вĕсем? -
Куçĕсем ялтра хĕлхем сапаççĕ.
Манăн çăлтăр ытарми хитре,
Вăл ăçта вырнаçнă – каламастăп.
Çавăнпа – йăл кулă ман питре,
Çавăнпа тавра та хӳхĕм маншăн.
Çăлтăр хирĕ евĕр халь тӳпе,
Юр уйне те çăлтăрăн куратăп.
Çутă - çутă çăлтăр çулĕпе
Савнипе пĕрле хавас утатăп.

***

Кӗреймен пулсан ҫеремлӗхе,
Таптайман пулсан ҫеҫкелӗхе –
Тухаймастчӗ те куҫҫулӗ сан,
Шăпам.
Кӗреймен пулсан ҫăкалăха,
Таптайман пулсан ҫырлалăха –
Ҫырăнмастчӗ пӗр сăмах та сан,
Шăпам.
Татаканӗ–таптаканӗ эс,
Кӗрекенӗ–тухаканӗ эс,
Ҫухатусăр кăсăк мар тӗнче,
Ыратусăр питӗ те кичем.

***

Эс пăхатăн ялан кӳренӳсӗр,
Хăпаратăн – анан ӳркенӳсӗр,
Ҫут тӗнчешӗн пулман ют ама,
Мӗншӗн, мӗншӗн пӗлместӗн канма?
Сан куллу ҫырмари пӗвере,
Тумлампра, пăрпала кӗвӗре,
Аллусем ҫупăрлаҫҫӗ пуҫран
Тухнă май ялкăшса тухăҫран.
Мăшăру е варли саншăн – уйăх?
Чун савни? Ҫавăнпа ҫук–тăр ыйăх.
Яланах сар хӗвел пӗр – пӗччен,
Вăл таса та илемлӗ, чечен.
Урамра лайăх ăшă пурри,
Пахчара – сарă кайăк юрри.
Ҫутатсам кантăка эс, хӗвел,
Чӗрене ан кăшлатăр кӗве.

***

Ăшăм çуннă чух сана кĕтеттĕм.
Макăраттăм саншăн татăлса.
Мĕншĕн тупăнтăн, асапăм – тертĕм? -
Тыткăнран пулмарĕ хăтăлса.

***

Паян кун ĕнерхи пулаймасть,
Унăн хăйĕн манмаслăх илемĕ.
Чун ыран та, нихçан та шăнмасть:
Ялкăшать унăн çутĕ хĕлхемĕ.
Иртсе кайнă пулсан аякран...
Кăмăла çĕклесе шуйхатмастăм.
Кĕр çулçи халĕ эпĕ сăнран –
Çук, иртнишĕн çапах кулянмастăп.

***

Шартламара
Ӳпĕнсе утать пĕр ватă.
Кĕрĕк çухи те ăшăтаймасть
Тинех ăна.
Ай, вернисаж, тыткăнлатăн эс.
Курăр
Çарамас хĕре,
Хитре пӳ - силлĕ пикене.
Ăна кăрлач сивви те хăратмасть:
Выртать хĕр юр çинче.
Вăл сывă.
Илемлĕ çамрăклăх
Хĕле парăнтарать.

***

Сукмак утнӑ май хӗресленчӗ.
Чӑрмантарчӗ утма катӑркас.
Пилешӗн тумтирӗ хӗмленчӗк,
Лутӑрканчӑк алкаллӑ сӑрка.
Эп ҫӑмӑл сывлатӑп кӗр кунӗн
Ват юманлӑх кӑларнӑ шӑрша.
Чӗреҫӗм таппийӗ те кунӗ.
Йӑлт лӑпланнӑ хӗл умӗн ӑрша.
Сана ӑсататӑп, вӑрманӑм,
Ай пӗртен-пӗр савни кайнӑ пек.
Нихҫан та ӗлккенлӗх курманнӑн,
Мал ҫул тытнӑ хастар кайӑк пек.
Хитре йывӑҫ хӗмӗ – пушар,
Хӗвел пуҫӗ чӑмӑр вут-шар.

***

Икӗ питлӗ ҫын
Уйӑхпа хӗвел пек:
Ун пӗр пичӗ ӑшӑ, тепри - сивӗ.
Хӑрах куҫӗ – чапрас,
Тепри – улшуҫ.

***

Йăптăх тăкнăн çап-çамрăк тирек
Хаваслăн силлет шурă мамăк.
Шаккатăп хуллен тумтире,
Çур юрлă çанталăк.
Вĕлтĕр – вĕлтĕр чечек тытнăскер,
Сухаллă, телейлĕ ӳнерçĕ,
Хирпе - улăхпа туслăскер,
Ман ĕмĕтшĕн кĕчĕ.
Умра – шурă мамăк – кĕтрет,
Асамçă ăна ӳкерет.

***

Алăкна эс çакнă пуль çăра,
Хунă пулĕ хаяматлă сăлăп.
Тем уçасшăн хупăннă чунра
Чупкалатăп ĕнтĕ эпĕ кăлăх.
Вăхăт-вăхăт: «Эпĕ сан», - теме
Хăяймастăн темĕншĕн, хăлатăм.
Çăкăр çеç-и кирлĕ этеме?
Эсĕ манăн хаклă шоколадăм?

***

Эс кантăк хуппине силлерĕн, тăрпалтай,
Ман канлĕ ыйхăма кĕрсе вăратрăн.
Лаш! хуçрăн та хускалнă турата –
Пĕр пĕчĕкçĕ йĕрке çуратрăн.
Пур сасшăн тав, чарусăр çил, сана,
Эп вăйлă çын эс тухнă тухманах.

***

Кайрăн.
Нихçан таврăнми шухăшпа
Утрăн эсĕ.
Айăп тупрăн манра.
Сан чуну çавăнпа вĕчĕхет,
Кăмăлу шурлăх пек йӳçĕхет.
Эпĕ вара – сăрăсти –
Сан сăнна кĕмĕлпе халь чӳхетĕп.
Куçусен кăварне ӳкеретĕп.
Сăмахсем шыраса хĕмленетĕп.

***

- Сан валли антартăм эпĕ çутă çăлтăр тӳперен,
Куçусен ачаш хĕлхемĕ питĕ – питĕ чипертен.
- Ман парнеçĕм кĕçĕр акă – сăмса тутăрĕ кăна,
Канвапа тĕрлерĕм вĕттĕн эпĕ саншăн çеç ăна.
- Çырларан та, канфетран та илĕртӳллĕ сан туту,
Йăрăс пӳллĕ, эс савниçĕм, килĕшӳллĕ- çке утту.
- Сывлăша касса вĕçесшĕн кайăк еверлĕ хăват
Пулнăран сана чĕнетĕп: «Эсĕ кăйкăрăм, хăлат».
- Хаклăскерĕм, халь кĕретпĕр çутă кантăклă киле,
Аннерен илтесчĕ пирĕн чи сăваплă пехиле.

***

Вилсе шыратӑн эс юр пек тасалӑх
Ху вараланӑ хыҫҫӑн ун ятне.
Ял халӑхӗн ҫӑварӗ ҫил хапхаллӑ:
Вӑл чӗррик! чӗррик! уҫрӗ алӑкне.

***

Шурӑ роза эс татасшӑн ӗмӗтре,
Пурнӑҫра ҫакланчӗ темӗншӗн хури.
Мӗн куратпӑр вӗҫӗм эпӗр сӑн-питре?
Ӑраскаллӑ чун пуянлӑхӗ пурри.
Турилкке ҫине хумастӑн илеме,
Шурӑ роза – пӗр самантлӑх киленме.

***

Ӑсатап эпӗ сивӗ хӗл кунне,
Тӗнкӗл-тӗнкӗл! саслӑ ҫитрӗ ҫуркунне.
Мӗн тери илемлӗ, савӑк ҫут тӗнче,
Ман ҫӳрес килмест-ҫке, тусӑмҫӑм, пӗччен.
Шӑнкӑр – шӑнкӑр шывӗ урамра юхать,
Ҫутӑ уйӑх ӑшшӑн тӳпере пӑхать.
Лайӑх, чун савниҫӗм, ҫӳреме ҫӗрле,
Кайӑксем юрлаҫҫӗ пирӗнпе пӗрле.
Мӗншӗн пулаймастпӑр юнашар ялан?
Тунсӑхлӑн ҫӳретпӗр, тусӑм, санпалан.
Тӗнкӗл-тӗнкӗл! саслӑн ҫитрӗн ҫуркунне,
Ӑнлансамччӗ эсӗ сарӑ хӗр чунне.

***

Эп санăн шурă пĕлĕтӳ пуласшăн,
Эс çӳлелле тинкернине курасшăн.
Эс сивĕ çил улавĕ çеç пуласшăн,
Сан хăлхусем тимленине туясшăн.
Эп ӳкнĕ çĕрĕ пек кăна пуласшăн,
Кам тупакан ачашлăхне туясшăн.

***

Салхун,
Йĕпхӳн
Курăнакан сăнар –
Шупкалнă çулçă пӳлĕхĕ –
Паян каяс хăна.
Çатма çулсен картламĕнче
Кулянăçăм тулать.
Палтăртатаççĕ çулçăсем,
Чун тунсăхĕ юлать.

***

Çилхăван çилсем,
Шартлама çилсем
Ӳлеççĕ, ӳлеççĕ, ӳлеççĕ.
...Эс çеç шарламастăн.
Ма куçăмсăр эс?

***

Вăрман хĕрри кĕреннĕн шупкаланчĕ.
Сăртсен тӳпи пĕр курăксăр, çара.
Сап-сар хĕвел пуçне хуллен кăларчĕ,
Тĕтре йăсланчĕ тарăн çырмара.
Кĕтӳç пушши шарт-шарт! туса сас пачĕ,
Нăрт-нарт, най-най, шимп-шимп! çеç таврара.
Кун пуçланать. Епле ялйышăм харсăр,
Ăçтан тӳсем ăна эп мухтамасăр.

***

Киремете чӳк тунă манăн халăх.
Халь те пулин кашлать курпун йăмра.
Çынсемшĕн йывăç, тен, асамлă палăк:
Ăна тытсан, асаплă пек чунра.
Ун тавралла хунать вăрман, туйралăх,
Колхоз хăмли ӳсет, ав, айлăмра.
Хăлаçланать умра çап-çамрăк хырлăх,
Канма епле аван, пĕлсемччĕ, ырлăх.

***

Çунчĕ-çунчĕ вутă–шанкă,
Ăшăнмарĕ пĕчĕк çурт.
Çункăçĕ сӳнсен те шанчăк
Хĕмлентерчĕ икĕ хут:
Шăпăр – шăпăр кантăк пăрĕ
Юхрĕ кăпăклă пăспа,
Кĕçĕр ăшă çумăр çурĕ,
Шĕпĕртетрĕ сасăпа.
Чĕремре – шăранчăк вут,
Çилçунатлă çăмăл ут.

***

Сыхлавçă пур хăш çыннăн юнашар,
Вăл пулнă чух курмастăн эс типшар,
Сăнарлă сывлăш евĕр çав мĕлке,
Сăпайлă, шурă, питĕ те ĕлккен.
Хушмасть сана чупмашкăн сĕм - çĕрле,
Тухсассăн та – утать-утать пĕрле,
Ярасшăн мар çумма вăл усала,
Çĕнмешкĕн вăйĕ пур–тăр «сухала».
Кам Пирĕштисĕр – йывăр кĕрешме,
Сан Эсрелпе те тивĕ ĕрлешме,
Шав çулăхасшăн сĕмсĕррĕн Шуйттан,
Ху тĕллĕн çеç чупатăн эс, утан.
Кĕресшĕн ăш-чикне Вĕреçĕлен,
Асасшăн арçынла санпа Çĕлен,
Сыхлавçăсăр кĕретĕн çылăха,
Манатăн тимлĕхе те çынлăха.
Хĕр-Пирĕшти çиçсен те юнашар,
Пĕлеймĕн, тусăм, пулĕ-çке типшар.
Эс ытларах шансамччĕ пĕр хăвна,
Çĕнтерĕн тетĕп пур хаяр çынна.

***

Вĕлтĕр-вĕлтĕр сарă çулçă,
Шĕпĕлкке çавра,
Санпалан эп куçа-куçăн
Ылтăн тухăçра.
Кӳренӳсĕр – хусканусăр
Ӳкрĕн пахчана.
Васкаса çитсе, тен, уссăр
Пăсрăн таврана?
- Тăхтасам, - тесе сĕнесшĕн
Темшĕн эп сана.
Ватăлас килмест мĕскершĕн?
Пул кĕтмен хăна.

***

Хĕвелпе çĕр – пĕлĕт –
Ытамĕнче эп.
Савнипе пур тĕлĕк –
Çуткамĕнче эп.
Çак тĕрлĕ савăшун тивлечĕ – эс,
Ман ытамра, - тĕнчеçĕм, халĕ эс.

***

Вылятăн эс манпа юри.
Санран вăлтса пĕлме çук: уссăр.
Анчах мĕн-ма пĕрне-пĕри
Çухатасран хăратпăр шутсăр?

***

Пĕлĕт татăкĕ – кив аçлăк.
Шăтăк-шăтăк каç маччи.
Уйăх хӳхĕм те мăнаçлă,
Пур-тăр тейĕн ун каччи.
Ман вара тем анлăш хирĕн,
Кӳлĕ тулнă пек, суран.
Ăмăр тӳпене – кĕç сирĕн,
Ыйхă çук ыратуран.
Çĕлесе пин саплăк лартнă
Пулĕ санăн чĕрӳне.
Эс мана хăçан юратăн?
... Иртрĕ сарă кĕркунне.

***

Эс пулмасан, эп сармăттăм çунат,
Çурхи кунра чечек шăтмастчĕ сансăр.
Йĕрке те çырăнмастчĕ-çке асапсăр,
Эс пуррипе, савни, кăвайт çунать.

***

Савăнăç мĕнне пĕлменлĕх мар çынра:
Ĕçнĕ чух «ĕçтеш» нумайăн шутсăр.
Хурлăх пуснă чух-тăванлăх пит сайра,
Пурпĕр йывăр пурăнмашкăн туссăр.

***

Эс юрă пиллерĕн, тавах.
Кайсан та эс çăлтăр хăвартăн.
Илмерĕн пурне те çапах...
Тĕнчесĕр епле пурăнатăн.
Ирпе вăрататать сар хĕвел,
Сан пек чуптăвать алхасуллăн.
Вăлах пуль кĕрет ман хĕве,
Хĕвелсĕр сӳнет ăшă кулă.
Эс панă вутчуль евĕрлех,
Метеор пек пулĕ кунçулăм.
Манпа эс утатăн пĕрле,
Сӳнмест çавăнпа ăшă кулă.

***

Çывăхрах ялкăшать вутлă çиçĕм:
Чун сӳлет, шикленетĕп пĕччен.
Пĕлĕтсен çук хĕрри. Пур-и вĕçĕ ?
Кĕç сӳнессĕн-пĕтессĕн тĕнче.
\- Ай, тур-тур, ай, хăратăп, хăрушă,
Ăçтарах ăшă, хӳтлĕх тупас?
Эп кăна. Уй чĕрчунсăр, пуш-пушă.
Çиçĕм çеç манпала тан чупать.
Уртăнасчĕ кĕпе аркинчен хăть.
Е ачаш ытама йăпшăнас.
Ку самант та телей кунĕ вăхăт,
Айăп пулĕ, çапах йăнăшас...
Ай, тур-тур, мĕн каларăм-ха? Çылăх.
Чăрсăр шухăш çиçменччĕ пуçра.
Санпалан, мĕн тăвас тен, эп çывăх.
Юнашар, акă, иккĕн – уйра.

***

Ылтăн çĕрĕ, кĕмĕл çĕрĕ кирлĕ пулĕ пӳрнене,
Эп ăна санран кĕтеттĕм тăхăнасшăн пӳрнине.
Питĕ шавлă туй кĕрлерĕ эп çуралнă ялăмра,
Пĕтĕм çын мана шелленĕ, эс хĕрхеннĕ пуль, йăмра.
Урăх хĕр йăл кулнă майăн шур пĕркенчĕк айĕнче
Эпĕ ыйхăсăр хӳхленĕ çухатушăн çĕр çинче.
Уйăх шăппăн-шăппăн шурĕ, ылтăн çĕрĕ кусрĕ пуль,
Çурçĕр çилĕ шухă вĕрчĕ, шур пĕркенчĕк вĕçрĕ пуль.

***

Çавраçил кускалать кăлтăрмачăн,
Çил ачи çаврăнать карусель.
Васкаса шур сухаллă кăрлачăн
Тумаллах сивĕ хĕлĕн ĕçне.
Шăннă кантăк çине пăхнăçемĕн
Эс куратăн тутар тĕррине.
Çурçĕртен тăсăлан вăрăм çемĕ
Пĕлтересшĕн соло пуррине.
Çак чарусăр тавралăхăн вальсĕ
Вĕççĕр-хĕрсĕр пластинка пекрех:
Чарăнмасть шурă-шурă хаваслăх,
Хĕл вăтаннăн юка вĕçтерет.

***

Кун ăмăрланчĕ çичĕ ютăн,
Тăванччĕ вăл манпа хăш чух.
Пĕлмен, çанталăк ман пек кутăн,
Ун еккине тупмашкăн çук.
Пуççаптарасшăн, кур, юнтармăш,
Мана хĕвел те ăнланмасть.
Текерлĕк эпĕ, ăшçунтармăш,
Куç хӳрипе те кăшт пăхмасть.
Пĕри те хĕрхенмест – савмаççĕ,
Манран çил-варкăш та тарать.
Эп пуррине мĕн ма курмаççĕ?
Хăçан телейĕм таврăнать?

Учитель

Учитель шкула манаймасть,
Унта унăн ĕмĕрĕ иртнĕ.
Пĕри те асран тухаймасть,
Вĕрентнĕ учитель, вĕрентнĕ:
Ачан ашшĕпе амăшне
Ун хыççăн тата тепĕр сыпăк.
Кĕретчĕ кашни çын ăшне,
Учитель пуриншĕн те çывăх.
Сахал-и чарусăр ача,
Ӳркевлĕ ача тем чухлĕ.
Ĕçлетчĕ учитель анчах...
Сăваплă ун пурнăç кунçулĕ.

***

Те йӳҫӗ пыл ҫие-ҫие ялан
Пылакпала хӗрхӳ мӗнле чухлатӑп.
Сӑн шухӑшлӑ кӑштах ҫавӑнпалан,
Йӗпхӳ кӗр кунӗ пек салхун кулатӑп.
Сап-сарӑ ҫулҫӑсем ӳксен ҫӗре
Вӗсен кӗске кунҫулӗшӗн уйлатӑп.
Ӗлккенлӗх питӗ вӑхӑтсӑр ҫӗрет.
Те сӑлтавпа, те нимсӗр кулянатӑп.
...Ҫапах сан сассуна тимленӗрен
Хам ҫӗр ҫине ҫуралнине манатӑп:
Чарлан пекех вӗҫетӗп тӳпере,
Кулатӑп эпӗ те, хавас кулатӑп.

***

Пӗлтӗрхи ларман юра итлетӗп,
Ҫырӑнман ӑшри кӗвве тимлетӗп,
Курӑнман ҫӑлтӑрӑма уйлатӑп,
Тӗмсӗлмен чечек ҫинчен шутлатӑп,
Таптаман сукмакӑма хыватӑп,
Тӗлленмен тӗлӗкӗме саватӑп.

***

Эс тӗксӗм кантӑк куҫӗ пек,
Эп тасатап сана канмасӑр.
Мӗн ҫутални – телей-сипет,
Хӗвел кураймӑп эп те сансӑр.

***

Çирĕмри нар питлĕ яшсене
Хĕрĕхри çын, ватă куранать.
Аллăра чун шăрататать сонет,
Утмăлти те – улттăра кăна.

***

Хавасла кун йӳçенкине упранăн
Паянлăха та кĕртрĕм асăма.
Тӳрленмелле çапах мĕнпур суранăм:
Кун календарĕ каймĕ тăсăма.
Кĕç вăхăт шунине пачах сисмесĕр
Сана ыталăп эпĕ айванла.
Эс пулăн хăвăнра, манра та – эсĕ,
Пĕрне-пĕри çеç пирĕн тупмалла.

***

Куçусен кӳллине эпĕ путрăм,
Шутламанччĕ вăл таран тесе,
Ман унта кĕрес марччĕ те урăх, -
Эс кулатăн каллех илĕртсе.

***

Кунçул çиппи, ай, çăрхаланчăк темшĕн.
Вăл сӳтĕлет те – татăлать хиврен.
Васкать çăмха çăва çине çитесшĕн,
Илсе каять вăл пирĕн ĕмĕре.

***

Кунçул çиппи, ай, çăрхаланчăк темшĕн.
Вăл сӳтĕлет те – татăлать хиврен.
Васкать çăмха çăва çине çитесшĕн,
Илсе каять вăл пирĕн ĕмĕре.

***

Хырăм хыççăн çăкăр ыйтнăн
Чупĕ тетĕн-им каçан?
Магомет хăй утăм тунăн
Эп пăхатăп сан куçран.
Мĕн кĕтни те саншăн паллă:
Виç сăмах кăна кала.
Чĕнмесен те – пулăп халлĕ,
Хытаратăп кăмăла.
Пурпĕр ман патах килен,
Ытамрах пĕрле вилен.

***

Эс чĕртнĕ каç сӳнсессĕн,
Мĕскер тăрса юлать? -
Пушанĕ чун чĕресĕ.
Ăна кам тултарать?
Сĕм тăлăх юлăп эпĕ
Тӳпесĕр татăлса.
Çухалĕ пурнăç шепĕ, -
Манран эс уйрăлсан.

***

Манпа сан ӗмӗлкӳ те ҫывӑхланмӗ,
Тӳпепелен ҫӗр пӗрлешмен пекех.
Пире халь тин кунҫул ҫиппи ҫыхаймӗ,
Апла пулсан, тӗл пулмӑпӑр текех.

***

Лашине тӗрӗс тытрӑм тесе,
Ҫунине кӳлме пӗлтӗм тесе,
Ҫулӗ ҫывӑх та тикӗс тесе,
Сулнӑка сулӑнмастпӑр тесе,
Юр ҫутиллӗ каҫ сӗмӗ тесе,
Кил тӗлне уйӑх ҫакнӑ тесе
Эп шутланӑ.
Лашине тӗрӗс мар тытнӑ эп,
Ҫунине урӑхла кӳлнӗ эп.
Ҫулӗ пулнӑ ытла аякра,
Шуҫ тупань пулнӑ ман – сулнӑкра.
Эп пӗлмен тӗттӗм каҫ ултавне,
Шаннӑ ҫеҫ кӗмӗл вут тӑхрине.
Уйӑха, хӗвеле уяман,
Шутласан, сахал мар йӑнӑш ман.

***

Шӑпчӑка ырла-ырла поэт
Манса кайрӗ харсӑр шапана.
Ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе юрлать дуэт,
Тенор сасӑ тыткӑнлать мана.

***

Кĕр пӳрте.
Алăк тăпси чĕриклетет, кĕтретĕм:
Вăл саншăн тилмĕрет.
Юншăхлать ялан.
Ан кӳр
Йĕп куçĕ пек çеç шанчăк,
Мана юратакан.

***

Тӳрмен чĕлхепелен тăшман пуçтартăм,
Тĕп-тĕрĕс сăмахпа – тăван-пĕтен.
Тӳррен касса тӳре-шара пуçтартăм,
Никамсăр юлтăм халĕ чĕмсĕртен.

***

Çутă те çĕр тĕслĕ пулакан,
Сахалрах ăна асăрхакан.
Е ăна курма та кирлĕ мар-тăр,
Йăмăхтармăш мар-и йалтăр-ялтăр?
Астуса юлать çав тĕсекен,
Çăлтăрăм, çиçен ялан ĕлккен.
Сăнлама çитмест сана ман сăрă,
Çутă сапалать те ĕнтĕ ăрăм.

***

Тараса пурах-тăр ăшăмра,
ЭВМ е сисĕм-калькулятор...
Çак анчах-и пирĕн хушăра?
Шухăша тытать тата локатор.
Хурлăха пĕлеттĕм малтанах,
Шăпуна та эпĕ чамаланă.
Йывăр чух килеттĕм пуль аса,
Чăн, çакна та тĕрĕсех ăнланнă.
Мĕн кăна илтмен эп, мĕн пĕлмен,
Халиччен санран ма сивĕнмен?

***

Шăрăхра çӳретĕп тăманра,
Шăплăхра шăв-шавлăх пур манра.
Уярта та - çумăр тенĕшкел,
Кутăн-пуçăн ăсăм мĕнешкел.
Çуклăхра куратăп пуррине,
Усалта – илемлĕх турри не.
Кăмăл аслă, ик енчĕ - çыран,
Эп каçатăп кĕперпе çуран.
Чарăнатăп хĕрлĕ тĕспелен,
Утăмлатăн эс симĕспелен.
Чул çинчех сан курăнчĕ яту,
Килчĕ-шим ик енлĕ юрату?

***

Инçетлĕхре эс çывăх куранатăн,
Куç умĕнче те – питĕ аякра.
Вилетĕн, чĕрĕлетĕн, пуранатăн...
Эс, кайнăскерĕм, юлнă-ха манра.
Мĕлт! мĕлтлетӳçĕн хăш чухне чĕпкуçĕн
Лап сӳннĕ евĕрех-çке туйăнан.
Çунмастăн эс пĕр тикĕссĕн те уççăн,
Сан еккӳпе сывласчĕ пĕр кана!
Эс, шутласассăн, манăн ăрăс ĕнтĕ,
Çап-çутăскерĕм, ылтăн, кĕмĕл, ĕнчĕ.

***

Пыл хурчĕсем пулайнă ав сăрка,
Мĕн пысăкăш пуçтараннă çăмха.
Салатакан та, имĕш, хурт ами,
Тур пулăштăр – синкерлĕ самани.

***

Эс хăвна пăхманшăн шутсăр ан çиллен,
Ан пулсамччĕ уншăн наркăмăш çĕлен».

Эп пулсан та пулăп саншăн Аçтаха,
Ун чĕлхи сăннисĕр, калăн, вăл Така.
Мăйракаллă Вăкăр евĕр ку чĕр чун,
Пур-ши унăн чунĕ, пур-ши унăн юн?
Арăсланнă майăн, тейĕн: чĕр Шуйттан,
Крокодил те пулă? Бегемот - гигант?
Эсĕ пăхмасассăн пулăп эп Çĕлен,
Çакăн пек савнишĕн шутсăр ан çиллен.

***

Такăрланнă ансăр вăрăм çул,
Тĕксĕмленчĕк ылтăн тĕслĕ çулçă.
Кантăк тăрăх юхрĕ сив куççуль,
Кăмăлĕ çак кунăн пурпĕр уçă.
Пулнă ĕмĕр чыслă кĕр хăни
Пĕтĕм ĕнерлевçĕ те ӳнерçĕ.
Кăмăллă ĕлккеншĕн ăнтăлни,
Евĕк чунлă çулçăллă ӳкерчĕк.
Пĕчĕкçеççĕ ăмăр пир çинче –
Ман çĕр-шывăн шăнăçнă кĕтесĕ.
Пур салхулăх, савăнăç. Кичем.
Кĕр сăнарĕн тĕксĕм çичĕ тĕсĕ.

***

Калас сăмахăм çитрĕ-ши вĕçне?
Е хапăл мар чун сăвăлăх ĕçне?
Тĕпп! тĕппĕр-тĕппĕр! иртнĕн шухă ут
Эс сӳнтĕн–шим, çыраслăх, çулăм-вут?
Мĕн пулчĕ çĕмĕрт çурнă чĕреме?
Вăл найкăш, нишлĕ, халсăр чăмăркка.
Сип-сивĕ, юншăх, хĕмсĕр, хăлтăркка.
Мĕн пулчĕ çыншăн çуннă чĕреме?
Те парăнасшăн вăл çурма çулта,
Поэзи картине кĕмесĕр сас,
Çитмесĕр çитмĕл çиччĕмĕш хута,
Пулмасăр этемле чунпа хавас.
Калас сăмахăм çитрĕ-шим вĕçне?
Пăрахрăм эпĕ сăвăлăх ĕçне.

***

Шыв çинче куçкĕски-кĕленче.
Икĕ сăн курăнать тĕпĕнче.
Юнашар çулçă тăкнă юман,
Пуçланасшăн пĕрремĕш тăман.
...Шыв çинче - куçкĕски-кĕленче.
Эс тăратăн çыран леш енче.
Пуç çине ўкрĕ йўçĕ йĕкел.
Çитеймерĕ, шутлатăп, мехел.

***

Сирĕлчĕ хуллен сĕм-тĕттĕм, каркăç,
Аякра - хĕвел те тĕтĕм, арка.
Сăрт çинчен эс пĕчĕкçĕ кăшкарăн
Курăнатăн, Шурă Шупашкарăм.
Атăла тимлет эрешлĕ купол,
Хум çинчи чиркў ĕлккен, тăп-тăпăл.
Теплоход майлах – шыври театр,
Ачасен керменĕ питĕ капăр.
Аурăллă мăнастырь тўремĕ,
Çăкасарлă урамсен çеремĕ,
Шыв сиккиллĕ ытарми заливăм,
Садăмсен илемĕ: груша, слива...
Пурăнатпăр Шурă хулара,
Вăл вăрманлă, симĕс-çке ара.

***

Эсĕ çуккине пĕлес пулсассăн
Эпĕ типĕп хăмăш тăрри пек,
Шўрĕ пек çеç шăхăрĕ ман сассăм.
Эп телейлĕ эсĕ пуррипе.

***

Çeçпĕл, çитрĕ санăн ĕмĕтӳ:
Кĕнекеçĕсем тем чухлĕ пирĕн.
Тен, çĕрмен те пулĕ-ха ӳтӳ.
Эс пĕлсемччĕ, халĕ пурнăç ирĕк.
Калаçатпăр хамăр чĕлхепе
Пĕтĕм халăх илтмелле хăюллăн.
Эс хăварнă çулăмлă хĕмпе
Пирĕнте юрлать вăрман та улăх.
«Хурлăх чулĕ çакнă» тенипе
Килĕшмерĕ паянхи хĕрарăм.
Вăл ӳнерçĕ, тухтăр та поэт.
Уншăн хаклă ĕçлĕхĕн шыравĕ.
Чăвашра ӳсеççĕ чечексем,
Харсăр çеçпĕл, эсĕ те хăрмарăн.
Пурăнатпăр ĕçлĕ чăвашсем,
Пирĕн йăхăн кăкĕ шутсăр тарăн.

***

Урамра çавăрттармăш тăман,
Чун-вăркамăш, эс мĕншĕн айван?
Ытлашши те шанатăн хĕле,
Вăл астармăш, вăл пӳтсĕр мĕнле.
Юр çинче – икĕ йĕрччĕ çĕрле,
Шăлчĕ шелсĕр юка ир енне.
Çил-тăманăм, хӳхлеччĕ пĕрле,
Эп çухатрăм çĕркаç савнине.

***

Сутмаççĕ пасарта ку кĕтесе,
Ăна илмешкĕн кирлĕ мар лицензи.
Ун хакĕ çук пăхмашкăн тĕсесе, -
Укçасăрскер, усламсăр вырăн ĕçĕ.
Эп сансăр санпалан - çак хăтлăхра,
Шыв, сывлăш, çăкăр, тен, кĕслемçĕм – эсĕ.
Чун шăплăхпа пĕр кĕвĕллĕ кунра
Каймастăн, тусăмçăм, ăша кĕмесĕр.
Улшуçăн эп курмастăп сан сăнна,
Ултавçăн, çуратусăн та эшкерĕн.
Тăванăм-паттăр, аякри хăна,
Сăмахăм тĕнчинчи куçсен сенкерĕ.
Тасалăха савайнăн ӳнерте –
Вĕр-çĕнĕ шурă хут, пĕрремĕш юрăм,
Сукмаксăр-çулсăр, йĕр те çук çĕрте
Çыртарнăн тунсăхпа телейлĕ юрă,
Утатăп шухăшпа санпа хирте.
...Никам та туянмасть ман йĕркеме,
Мĕн тупăшĕ парайтăр туйăм вучĕ.
Пĕриншĕн вăл – вĕт-шакăр чĕркеме,
Тепришĕн – пĕр çĕре тухмалăх хучĕ.
Мĕн чухлĕ йӳнĕ сăвă кĕнеки –
Чĕремшĕн хаклă çырнă хут тĕрки.

***

Çип ĕмĕрĕ ялан тăлланчăк,
Пĕр вĕçĕм тĕвĕллĕ, чăлханчăк.
Хăй шутсăр хаклă пурпĕрех:
Çип кирлĕ пĕтĕм çĕвĕре.

***

Тахçанах юрламасть сарă кайăк,
Уншăн йывăç турачĕн çук айăп,
Хăрнă пирĕн умри хурама,
Чĕвĕл сасă тухмасть урама.
Шăпчăк кайăкшăн лартрăм йăмра
Юрăпа вăранма ирсерен.
Вăл вĕрентĕ ачашшăн ырра,
Кĕвĕ майăн вăрантăр сирень.
Йывăç кирлĕ мĕнпур таврара,
Кайăк-кĕшĕк юрлатăр, ара.

***

Ытла ансат тăман асать.
Çанталăк ӳсĕр-пӳсĕр.
Ман тăнлавра хĕл алхасать,
Çӳç-пуç шуралчĕ кĕçĕр,
Çăва-çура, кĕркуннене
Йĕркеллĕн ăсатмасăр
Çитерчĕç сивĕ хĕл кунне,
Ларатăп ăнланмасăр.
Шап-шурă, кĕмĕл çӳçлĕскер,
Пăхатăп кукамайăн.
Пĕр ватăскер, пĕр çамрăкскер,
Ах, пĕртте çук ман айăп.

***

Шкул вӗрентни килет хӑш чух аса:
«Спираль вӑл - ӗмӗр евӗрлӗ, ачамккӑ,
Ик вӗҫӗ унӑн пырӑ явӑнса...»
Халь темшӗн каялла куҫасшӑн акӑ.
Прогресс та диалектика ҫукран
Пӑхатӑп хыҫала теме чухланӑн.
...Ҫӳретпӗр халиччен утса ҫуран,
Нимех те ҫук-ха мухтанмашкӑн манӑн.
Чим, ыттисем курман-и ӑраскал?
Ҫыравҫӑсем унччен те йышлӑ пулнӑ.
Тивлечӗ пулнӑ, тен, вӗсен мӑскал?
Ахальтен мар Миттан чыс-сумӗ юлнӑ.
Ытла та хаклӑ ят хӑварасси
Е юлмасса та вӑл пачах пултарӗ...
Историн пур ӑна хуратасси,
Ятсем ҫухалчӗҫ, тӗлӗк пек, мӑнтарӑн.
Талант шыратӑр ҫамрӑк ӑрура
Ҫухалнисен йышне шута хумасӑр.
Мӗнчуль чӗлхеҫӗн ӗмӗрӗ хура,
Пире те тинкеретӗр халь шанмасӑр.
Тӑван сӑмахшӑн тунсӑхлакана
«Эс националист» теме пӑхатӑр.
Ку ӗнтӗ вилӗм суннипе танах:
Чӗлхем вӑй илесрен епле хӑратӑр.
Пусахласа вӗрентнӗ чӗлхене
Ӑша илесшӗн тапаҫланчӗ халӑх.
Те хамӑра кӑна килет хӗне?
Пуҫ каҫӑртса ҫухалчӗ пур сӑпайлӑх.
Политика хӗрарӑмшӑн ҫичют.
Ман пурнӑҫ - ҫепӗҫ юрату, ачашлӑх.
Кӑнттам чӗлхешӗн пӗтеретӗп хут,
Кӗрешӳре таптанчӗ ҫутӑ яшлӑх.
Ӳнер ҫынни ҫурма ӑслай пекрех,
Те утнӑ чух та ҫырнӑран темтепӗр.

E аташать пек сăвăç сĕмлĕхре,
Кăшт тайăлнă пекрех, чăнах та, эпĕр.
Темрен тăвассăн темĕн тĕнчере
Патваррăн, кĕрешӳсĕн курăнатпăр.
Çунса кĕлленчĕ чăнлăхшăн чĕре,
Пĕрех чĕлхешĕн вĕçĕмсĕр çунатпăр.
Эс аслă вырăс чĕлхинчен кая
Юлмашкăн тивĕç мар, тăван сăмахлăх.
Тăвасшăн халĕ те пире ая,
Мăнаçлăхна кăтарт-ха, савнă халăх.
Вăл çывăрать-ха пирĕн юнăмра
Вăраниччен чăвашлăхăн хĕлхемĕ.
Йăлтлатĕ çавă е паян-ыран,
Йăл илĕ çĕнĕрен пĕтес чĕлхемĕр.

***

Эс –йĕплĕ чĕрĕп пек - çырлалăхăм-шăлан.
Тен, тивĕç мар сана кашни тытса пăхмашкăн,
Салхуллă çулçă ӳкнĕ май килсе татмашкăн?
Сан çимĕçне çиме хăймасть иккен пăлан.
Ах: «Йӳçĕ! Йӳçĕ!» – тенĕ чух пылак ялан.
Пыл тенĕ япала хĕрхӳ кăна е эрĕм.
Çырлахрăмăр, шăлан, кун пек шăпапалан,
Эс мĕншĕн йĕплине çапах та пĕлеймерĕм.
Утатăп сан патна куллен эп кĕр çитсен
Пĕр шăртлă илемне курасшăн-йăпанасшăн,
Пăхатăп чи малтан, çырлам, сана çисе,
Эс мĕншĕн тутлине пĕлесшĕн-ăнланасшăн.
Вăрманăн тупсăмне кирлех-ши чухлама?
Страница юлтăр, тетĕп, вулама.

***

Эп пулсассăн кимĕ, эсĕ - манăн хум:
Путарас килмесĕр сунччĕ ырă кун,
Вĕттĕн юхнă майăн ан тăрсам чĕвен,
Çырана çитерччĕ, тусăм, ерипен.
Компасăм пулсассăн, эпĕ - çулçўрен,
Çулăм-йĕрĕм манăн шутсăр тĕрлĕрен.
Аташма ан парччĕ тĕттĕм çаранра...
Пулăшусăр-мĕнсĕр чăнкă çыранра.
Эп тĕве пулатăп, эсĕ ху – пушхир,
Инкеке, тархасшăн, савнă тусăм, сир.
Касăхса çитсессĕн шывсăр шăрăхра
Вĕçтерме ан хăйччĕ шухă хăйăра.
Эп – клавиатура, иксĕмĕр – рояль,
Юрă хывнăçемĕн янăратăр ял.
Пулăшасчĕ пирĕн пĕр-пĕрне ялан,
Эп телейлĕ пулăп, тусăм, санпалан.

***

Чĕнеймĕп тин хăтлă куна.
Эп туслă çаралнă кĕрпе:
Ун юншăхĕ çывăх чуна,
Тĕтрелĕх – шап-шурă ирпе.
Çўç тăкнăн ларать кукшапуç,
Ăсатнăн майлах ватлăха.
Пулайтăр кĕр сăнĕ улшуç -
Кĕместĕп каллех яшлăха.
Ват ĕмĕрĕн хăйĕн илем –
Кив çулçăн чаксассăн та çул,
Кĕтместĕп пурнасшăн хĕле,
Кĕр маншăн – шăратнă сарçу.

***

Пултăн эс лĕпĕш, çункав.
Трагедин пĕр пайĕ. Маэстро.
Юлтăн пĕр вăхăт çука,
Эс пуйрăн та кайрăн пĕр ăстрăм.
Аван-çке çукпа-пурпала,
Телейĕ-суйхи çурмалла.

***

Кам хăйĕ çур килмест теме,
Вăл сан пекех килет-каять.
Калаймăп эп сана темех,
Шыв-шурлă кун пĕрех юлать.
Кам хĕл иртнишĕн тилмĕрет?
Вăл сан пекех килет-каять.
Юр тунсăхĕ юлать пĕрех,
Тăманĕ, сивĕ кун юлать.
Кам кĕр çитнишĕн эрленет?
Вăл сан пекех килет-каять.
Сив çумăр пурпĕр пĕрĕхет,
Сар çулçăн кăмăл тăпланать.
Кам çу çитнишĕн савăнать?
Вăл сан пекех килет-каять.
Хĕвелĕ те пĕрех анать,
Кун вăрăм, ĕмĕрĕ чакать.

***

– Пур чухне Пурккалла,
Çук чухне Çумккалла
Пурăнсан пурнăç пулмĕ, -
Тееттĕн. –
- Укçуна перекетлĕ кăна тыткала, -
Тенине хăлхана эп чикеттĕм.
Анне вĕрентетчĕ çапла,
Ун пулнă укçи те апла.

***

Эпир вĕрин сывлани,
Эпир ассăн сывлани
Ахаль пулĕ тетĕр-и,
Ахаль юлĕ тетĕр-и.
Хура халăх хашлатни,
Хура халăх ахлатни
Çĕр çурăкĕ тетĕр-и,
Йĕп куçĕ çеç тетĕр-и.
Асапĕ те кӳлĕ пек,
Хурлăхĕ те тинĕс пек.
Чунра кăмăл çĕтĕлет,
Чунра тăвăл çĕкленет.
Пĕви кайĕ татăлса,
Тинĕс кайĕ сарăлса
Пирĕн вĕри куççульпе,
Хура халăх çиллипе.

***

Мăнукпа вылятăп сикмелле,
Унпалан çĕре шап! ўкмелле,
Чикĕль-макăль турăмăр паян,
Тивĕç çук пулмашкăн ман наян.
Хулпуççи çинче ларать мăнук,
Авăнатăп эпĕ ух та ух!
...Ăйăр пек чупатпăр пўлĕмре,
Тăлт! Тăлт! Тăлт! Тапса тухать чĕре.
Ватăра та çамрăкра - илем,
Вăйă-кулă сапăрлать киле.

***

«Саркайăкĕ иленнĕн чунăма
Курам чăнлатнăн савнă çыннăма.
Илемлĕн вĕçкелет, чĕвĕлтетет,
Чиперлетет салхуллă сăнăма».

Эп юрлăп теменччĕ садра,
Эп пулăп теменччĕ саркайăк.
Тем тупрăм, пĕлместĕп, санра?
Юратнăшăн манăн пур айăп.
Пĕрле, авăнсаҥ та турат,
Юрлаттăмăр чĕвĕл те чĕвĕл,
Тухатчĕ пуль кĕвĕ те кĕвĕ,
Ик сасă – ик тĕрлĕ, юрать.
Вĕрентрĕн мана юрлама,
Вĕрентрĕн мана юратма.

***

Эс килнĕ-çитнĕ туйăнаттăн
Çанталăк сапăр вăхăтра.
Çил çапнă-ватнă хăр туратăн
Юлассăм çукчĕ пек шутра.
Кун, асăрхарăм, сусăрланнă:
Тăр! хуçална хĕвел ури,
Йăлт курăнаççĕ суранланнăн
Куç умĕнче, хыçра пурри.
Мĕн йăшнине, чăн тухтăр евĕр,
Сиплекеленĕ хушăра
Мĕн ма-ши аманатпăр хамăр?
Халь ĕнтĕркетĕп ăшăра.
Шыратăп хамшăн та эмел,
Пулсамччĕ, тусăмçăм, кĕтмел.

***

Хăш чухне турат куççилĕн,
Çывăхран е аякран,
Типĕ кунăн та куççулĕн
Курăнатăн алăкран.
Эс кайманшăн-çухалманшăн
Пур-тăр манăн айăп та:
Тивăç пуль чĕре манмашкăн
Иккĕн ларнă вăхăта.
Çилпеле вĕçтернĕ кĕлĕн
Шухăш сирĕлтĕр тесен, -
Урăх юрă, урăх кĕлĕ,
Пӳлĕме хуллен кĕрсем.
Умăмра – турат куççи,
Пур-ши вăл телей уççи?

Семиструнная вселенная

Литературно-художественное издание
Любовь Федорова

# Çичĕ хĕлĕхлĕ тĕнче

[Стихи]

Ответственный за выпуск Л.М.Федорова

Издание подготовлено при участии
Чебксарского учебно-методического центра

Подписано в печать с оригинала-макета 22.08.2000.
Формат 60x84/16
Бумага писчая. Печать оперативная. Усл. печ. л. 3,95.
Уч.-изд. л. Тираж 300 экз. Заказ 499

Издательство Чувашского госуниверситета
Типография Чувашского университета
428015, г.Чебоксары, Московский проспект, 15

12=00